# Сказка Тощий Волк



Пĕр ырхан Кашкăр выçăхса вилме тапратнă тет те уласа анчах ларать тет. Куна Упа курать те çапла калать:

— Ав çав çырмара вун çич çулхи така пур, çавна кайса çи, — тет.

Кашкăр хĕпĕртесе ӳксе çырмана чупса анать те чăнахах та хай Такана тĕл пулать.

— Ну, сана çисе яратăп, — тет.

— Çиессе çийĕн те-ха, анчах эпĕ сан ăшна кутăн кĕресшĕн мар, пуçăн кĕресшĕн, — тет кăна хирĕç Таки.

— Юрĕ, — тет Кашкăрĕ.

Вара Таки ту çине хăпарса кайса мĕнпур вăйпа чупса анать те Кашкăра пĕрех мăйракипе панлаттарать. Кашкăрăн хырăмĕ кĕçех çурăлса каймасть. Таки хӳрине вĕлт! вылятса малалла вĕçтерет.

Кашкăрĕ ятла-ятла Упа патне пырать.

— Ну, мĕнле, çирĕн-и? — тесе ыйтать Упи.

— Ăçта çиме, чутах хырăма çурса пăрахмарĕ, — тет Кашкăрĕ.

— Ăна çиеймерĕн пулсан ав çав çырмара ула Кĕсре пур, эппин, çавна кайса çи, — тет Упи.

Кашкăр хĕпĕртесе ӳксе çырмана чупса анать те хай ула Кĕсрене тĕл пулать.

— Ну, сана çисе яратăп, — тет вăл. Куçĕсем хăйĕн йăлт-ялт çиçеççĕ.

— Çиесси çийĕн те-ха, анчах эп сан ăшна пуçăн мар, кутăн кĕресшĕн, — тет Кĕсри. Унтан кутăн çаврăнса тăрать те Кашкăра пĕрех шартлаттарса тапса ярать. Кашаман аран-аран тарса хăтăлать.

Кăна каллех Упа тĕл пулчĕ те ыйтать:

— Ну, епле, çирĕн-и Кĕсрене? — тет.

— Ăçта çиме, кайри урипе тапса кĕçех аяк пĕрчине хуçса пăрахатчĕ, — тет Кашкăрĕ.

— Ăна çиеймерĕн пулсан ав çавăнти арпалăхра пĕр Сысна пур, çавна кайса çи эппин, — тет Упа.

Кашкăр арпалăха çитет те Сыснана тĕл пулать.

— Ну, халь сана çисе яратăпах, — тет шăлĕсене качăртаттарса.

— Çиесси çийĕн те-ха, анчах малтан пĕр çавра юрă юрласа кăтартам, — тет Сысни. Унтан нăри-и-ик! нăри-и-ик! тесе çухăрма пуçлать. Сысна çухăрнине илтсе çынсем чупса çитрĕç те тытăнчĕç Кашкăра кӳпкемешкĕн. Ну кӳпкеççĕ, ну кӳпкеççĕ! Кашкăрĕ аран-аран хăтăлса тарчĕ.

Çитрĕ Упа патне.

— Каллех тытса çиеймерĕн-и? — тесе ыйтать Упи.

— Ăçта çиме, хама кĕçех çапса пăрахатчĕç, — тет Кашкăрĕ.

— Апла пулсан ав çавăнта хуçа Йытти пур, кайса тытса çи, — тет Упи.

Çитрĕ Кашкăр хуçа Йытти патне.

— Ну, халĕ ĕнтĕ сана тытса çиетĕпех, — тет.

— Мана çинипе нимĕн усси те пулас çук, эсĕ луччĕ хуçа тĕп сакайĕнчи апатçимĕççене кĕрсе çи. Унта пыл та, аш та пур, — тет Йытти.

Кашкăр йăпăр-япăр тĕп сакайне анса кайрĕ. Йытти сакай алăкне шăнкăрт хупса хучĕ те вĕрме тытăнчĕ. Йытă вĕрнине илтсе çынсем чупса çитрĕç, тĕп сакайĕнчи Кашкăра çавăнтах çапса пăрахрĕç.

Мультимедийная онлайн-библиотека

“Сказки Поволжья”

Иллюстрированые и озвученные сказки народов Поволжья.